Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

26 (7666) № ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи мартăн (пуш) 28-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**«Муркаш пики – 2009»**

## Тăрăшуллă, ĕçчен тата илемлĕ



**Мартăн 24-мĕшĕнче районта «Муркаш пики – 2009» конкурс иртнĕ. Ăна района йĕркеленĕренпе 65 çул çитнине халалланă.**

**Конкурса 13 хĕр хутшăнма кăмăл тунă. Вĕсем – пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсенче аслă классенче вĕренекенсем. Хĕрсем тĕрлĕрен 5 конкурсра хăйсен пултарулăхне кăтартнă. Участниксем «Эпир – чăваш çамрăкĕсем!» визитка-представлени конкурсĕнче тăван тавралăх историне пĕлнине, чăваш ташшин «Ай, ташлар-и ташшине» конкурсĕнче ташлама пултарнине, художество ăсталăхĕн «Чăваш тĕрри» конкурсĕнче тĕрлес ăсталăха кăтартнă, чăваш наци çимĕçĕсене пĕçерессипе те вăй виçнĕ.**

**Пĕрремĕш вырăна тухса «Муркаш пики – 2009» титула Муркаш шкулĕнче вĕренекен Татьяна Колбасова çĕнсе илнĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче Москакасси шкулĕнчи Татьяна Андреева тата Йӳçкасси шкулĕнчи Аня Кузьмина.**

**Сăн ӳкерчĕкре: конкурс призерĕсем.**

**Ыйту – хурав**

## Транспорт налукĕ пиркиех

**– Уйрăм çын хăйĕн автомобильне ГИБДД органĕсенче учетран кăлармасăрах генеральнăй доверенноçпа сутнă тейĕпĕр. Транспорт налукне тӳлемелли пирки уведомлени вара ун патне пырать. Транспорт налукне вăл тӳлеме тивĕç-и, транспорт хуçи вăл мар вĕт-ха?**

– Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 357-мĕш статйипе килĕшӳллĕн транспорта кам çине регистрациленĕ, вăл транспорт налукне те тӳлесе тăма тивĕç. Вĕсене Раççей Федерацийĕн законодательствипе палăртнă йĕркепе регистрацилемелле.

Çапла вара транспорт налукне тӳлес ыйтăва татса панă чухне асăннă транспорт хатĕрĕ налук тӳлекенре пулнине мар, транспорта ун çине регистрациленине шута илеççĕ.

Транспорт налукне тӳлемелли суммăна налук органĕсем Раççей Федерацийĕн территорийĕнче транспорт хатĕрĕсене регистраци тăвакан патшалăх органĕсен сведенийĕсене кура палăртаççĕ.

Автотранспорт хатĕрĕсене патшалăх регистрацийĕнчен кăларассин ыйтăвĕ Раççей Шалти ĕçсен министерствин патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн компетенцине кĕнĕ май, ку ыйтупа асăннă органсене пырас пулать.

**Е. АРСЕНТЬЕВА,**
**налук инспекцийĕн налук тӳлекенсемпе, вĕсене регистрацилес тата учета илес енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ.**

**Çур аки умĕн**

**Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче мартăн 27-мĕшĕ тĕлне çурхи уй-хир ĕçĕсене irттерме минераллă удобренисем мĕн чухлĕ хатĕрленине кăтартни**

***1. Удобренисем кирлĕ (тоннăпа). 2. Хатĕрленĕ (процентпа).***

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 100 | 25 |
| «Волга» ООО | 50 | 20 |
| «Восток» | 30 | 117 |
| «Герой» | 110 | 101 |
| Ильич яч. хис. | 110 | 82 |
| «ВТМ» ООО | 30 | 15 |
| Ленин яч. хис. | 20 | 0 |
| «Лидер» АФ ООО | 20 | 0 |
| «Моргаушская» | 10 | 50 |
| «Оринино» | 80 | 98 |
| «Передовик» | 20 | 0 |
| «Свобода» | 250 | 80 |
| «Сеятель» | 50 | 80 |
| Суворов яч. хис. | 120 | 0 |
| «Рассвет» АФ ООО | 50 | 80 |
| «Ударник» | 350 | 100 |
| Чапаев яч. хис. | 50 | 72 |
| Чкалов яч. хис. | 70 | 100 |
| ДаАн ООО | 30 | 33 |
| Мичурин яч. хис. АФ | 20 | 0 |
| Ытти предприятисем | 430 | 35 |
| **Ял хуçалăх пред-пе** | **2000** | **63** |

**Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕн ыйтăвĕсемпе**

## Июлĕн 1-мĕшĕччен вĕçлемелле

2010 çулта Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕ пулассине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Хатĕрленӳ ĕçĕсем иртнĕ çулхи 2-мĕш кварталтах пуçланнă. Мĕн туса иртternĕ ку таранччен? Иртнĕ ытлари кун перепиçе хатĕрленсе ирттерессипе ĕçлекен комисси ларăвĕнче (район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В.К. Ананьев ертсе пычĕ) чи малтанах граждансем килнĕ тата пурăнакан вырăнта регистрацине тăмалли тата регистрацинчен тухмалли правилăсене епле пурнăçланине пăхса тухрĕç. РФ федераллă миграци службин управленийĕн Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи территори пункчĕн ертӳçи З.М. Сорокина каланă тăрăх, граждансем килни тата тухса кайни çинчен калакан адреслă листсене Çатракасси, Шетмĕпуç, Москакасси ял тăрăхĕсем халь çеç асăннă территори пунктне вăхăтра тăратаççĕ.

– Оринин, Уйкас Янасал, Муркаш, Хорнуй ял тăрăхĕсем те ку ĕçе çаплах тăвасса шанас килет, – терĕ Зоя Михайловна.

Районти ЗАГС пайĕ те çуралнă тата пурнăçран уйрăлнă граждансем çинчен сведенисене тăтăш парсах тăрать.

Халăх перепиçĕччен адреслă хуçалăха йĕркелесе çитермелле. Ларура Юнкă, Ярославка тата Ярапайкасси ял тăрăхĕсенче ку ĕç епле пулса пынине тишкерчĕç. Ярославка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.В. Пайгусов палăртнă тăрăх, пур ялсемпе те, урамсемпе те адреслă хуçалăха инвентаризацилесе тухнă. 758 хуçалăхран 596 çуртăн номерĕсене çакнă. Çак ĕçе тума культура ĕçченĕсем пулăшнă. Урам ячĕсене кунта ялăн икĕ вĕçĕнче вырнаçтараççĕ. Вĕсене тата 14 хатĕрлемелле. Ку енĕпе пĕтĕм ĕçе майăн 1-мĕшĕ тĕлне туса пĕтерме палăртнă. Çакна валли 10 пин тенкĕ тăкаклама тивет.

Ярапайкассисене вара адреслă хуçалăха йĕркене кĕртме 20 пин тенкĕ кирлĕ пулать. Пурĕ 381 çурт валли номерсем, 69 урамăн ячĕсене хатĕрлемелле вĕсен. Çаксене йăлтах июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне туса пĕтерме тĕллев лартнă.

Юнкăсен 236 çурт номерне çĕнетмелле. 8 урам валли вĕсен ячĕсене çырса çакмалла. Çак ĕçе пурнăçлама районти ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă 5 çынна вăхăтлăха ĕçе илеççĕ. Майăн 31-мĕшĕччен палăртнине пурнăçлама шутлаççĕ.

Ларура граждансемпе должноçри çынсем граждансем килнĕ тата пурăнакан вырăнта регистрацине тăмалли тата регистрацинчен тухмалли правилăсене епле пурнăçлани çинчен кашни уйăхăн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр пĕлтермеллине палăртрĕç. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене урамсен ячĕсене кăтартассипе, çуртсен номерĕсене вырнаçтарассипе ĕçе малалла тăсма, туса çитерейменнине кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕччен вĕçлеме сĕнчĕç. Тунă ĕç çинчен кашни уйăхăн 4-мĕшĕнчен кая юлмасăр Чăвашстатăн статистика уйрăмне пĕлтермелле.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Культура ĕçченĕсен форумĕнчен**

## Чĕрене хĕлхем сапакансем

Иртнĕ юн кун кăçалхипе 2-мĕш çул ĕнтĕ çĕршывра Культура ĕçченĕсен кунне уявларĕç. Пирĕн районти çак професси çыннисем вара çав кун районти Культура çуртне пуçтарăнчĕç. «Зажечь сердца – великое призванье» çапла ят пачĕç вĕсем хăйсен форумне. Вăл пуçланиччен вара пуçтарăннисем фойере йĕркеленĕ культура ĕçченĕсен пултарулăхĕн куравĕпе паллашрĕç.

–Эсир тăрăшнипех районта 30 тĕслĕхлĕ библиотека туса хутăмăр. Тепĕр 9-шĕ вĕсен филиалĕсем пулса юлчĕç. Халĕ вара ялсенче культура учрежденийĕсене çĕнетсе паянхи кун ыйтакан шая лартас ĕç пырать. Çакнашкал пĕрремĕш база Культура çуртне Республика кунĕ умĕн Кашмашра хута ятăмăр. Пĕрле пулсан, пĕр тĕллевпе вăй хурсан, эпир сирĕнпе кирек епле ĕçе те тума пултаратпăр. Кашни çын хăй вырăнĕнче çине тăрса тăрăшни кирлĕ. Эсир вара çак ĕççене йĕркелекенĕсем пулса тăратăр. Палăртнине пурнăçлама сирĕн вăй-хал та, чун хавалĕ те çиттĕр, – терĕ район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов залра ларакансене професси уявĕ ячĕпе саламласа.

Кирек епле уявра та пултаруллисене чысласси ырă йăлана кĕнĕ. Культура ĕçченĕсен форумĕнче районти художество пултарулăх коллективĕсен районăмăр 65 çул тултарнине халалласа ирттернĕ «Чечеклен, юратнă Муркаш Ен» фестиваль-конкурс çĕнтерӳçисем тивĕçрĕç çав чыса. «Халăх коллективĕ» ята çĕнсе илнĕ юрăпа ташă ансамблĕсенчен 1 вырăна никама та паман. 2 вырăна вара Орининти «Шуракăш» тата Мăн Сĕнтĕрти «Янаш» ансамбльсем тивĕçрĕç. 3 вырăнта – Москакассинчи «Шуçăм». Хальлĕхе халăх ятне илейменнисенчен вара малти виçĕ вырăна çак коллективсем пайларĕç: Калайкассисем – пĕрремĕшсем, Шетмĕпуçсемпе Сыпайкассисем – иккĕмĕшсем, Тренккăсем, Кашмашсем, Юнкăсем – виççĕмĕшсем.

**(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).**

**Юбилей**

## Саламлатпăр



Ĕçчен те чунĕпе илемлĕ çыннăмăра, хисеплĕ аннене, юратнă асаннене, кăмăллă тăвана, ырă пускиле – Юнкă ялĕнче пурăнакан **Мария Григорьевна ТАРАСОВАНА** 75 çулхи юбилей ячĕпе чĕререн саламлатпăр.

Эсĕ яланах хăвăн чун ăшшипе çывăх çынсене ăшăтса, çемье тăнăçлăхне упраса тăратăн. Тайма пуç сана эсĕ пурришĕн. Пурнăçу малашне те çурхи хĕвел пек çутă, кĕрхи кун пек пуян пултăр.

**Салампа: ачисем, мăнукĕсем, кинĕсем, кĕрӳшĕ, хăти-тăхлачисем, тăванĕсем, пускилсем.**



Дорогая **Раиса Варсанофьевна!**
Поздравляем Вас с 60-летним юбилеем!
Пусть надежда, радость, счастье,
С Вами дружат каждый час.
Пусть суровые ненастья
Стороной обходят Вас.
Пусть морщинки Вас не старят,
Пусть не трогает беда,
А природа пусть подарит
Жизни долгие года.

**С поздравлением дети, снохи, внуки, родные.**

***Вырсарни кун çуллахи вăхăт çине куçатпăр. Сехет йĕпписене 1 сехет малалла куçарма ан манăр.***